Муркаш районĕ 65 çул тултарнă май

Çамрăксем ĕçрен хăраман

1964-1965 çулсенче ВЛКСМ Муркаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса Н.Б. Борисов ĕçленĕ. «Муркашра ĕçлеме тытăнсанах кунта ĕмĕрлĕхех юлатăп тесе пĕрре те шутламан. Шăпа вара акă мĕнле çаврăнса тухать.

Вăл вăхăтсене аса илес пулсан, çамрăксен çирĕп дисциплини, пуçарулăхĕ ума тухса тăрать. Çамрăксен ĕçĕнчи нумай кăтартусемпе Муркашсем малтаччĕ. Комсомолăн Тĕп комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсем сахал мар пулнă Муркаш тăрăхĕнче. Район экономикишĕн çамрăксем ырми-канми тăрăшатчĕç. Астăватăпха, нумай комсомолеца Мичурин, Чапаев яч. хис. колхозсене фермăсене ĕçлеме янă. Ытти вырăнсенче те ĕçрен хăраман çамрăксем тăрăшнă. Äçта ĕçлеме çынсем çитместчĕç, çавăнта специалистсене те, ертӳçĕсене те ĕçлеме яраттăмăр. Тыррине те кар тăрсах çурлапа вырнă, анчах ĕçлеместĕп тесе калани пулман. Бригадир ĕç хушманни те наказанипе пĕр танах пулнă», – аса илет паян Николай Борисович.

Çак сăн ӳкерчĕке вара 1965 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнчи районти комсомолецсен 3-мĕш отчетпа суйлав конференцийĕнче тунă. Унта Н. Борисова пропаганда ертӳçи пулма шанса панă.

Н. НИКОЛАЕВА.

Пурин патне те ăшă çитернĕ

Паян ачасем хăтлă та ăшă шкулсенче вĕренсе маларах, пĕр 40-50 çул каялла, шкулсенче кăмакасем пулнине ума кăларса тăратаймаççĕ. Ун чухне ирпе ачасем шкула киличчен техничкăсем кăмака хутса шкул пӳлĕмĕсене ăшăтнă, вуттине те тепĕр чух хăйсемех çурса кĕнĕ. Ачасем тăрăшса вĕренччĕр тесе учительсем кăна мар, вĕсем те шутланă. Вăхăт иртнĕçемĕн шкулсем çумĕнче котельнăйсем хута кайнă. Çĕр кăмрăкĕпе усă курни, паллах, ĕçе малтанхинчен çăмăллатнă. Анчах çут çанталăк газĕ пирки ун чухне шутламан-ха.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче шкулсене, ача сачĕсене газпа хутса ăшăтас ыйтăва татса пама пуçаннă. Вăл вăхăтра район администрацийĕн вĕрентӳ пайне Валерий Михайлович Васильев ертсе пынă. «Пур шкула та çут çанталăк газне çитерес тесе çак ĕçпе çыхăннă çынсем питĕ тăрăшатчĕç. Вĕсем вăй хунипех 2000 çулччен вĕрентӳ учрежденийĕсене газ кĕртес ĕçе пирĕн район республикăра пĕрремĕш вĕçлерĕ. Малтанах Оринин тата Йӳçкасси тăрăхĕсенче газ пулнă. Унтан вара ытти вырăнсене те газ пăрăхĕсене тăснă. Квартальнăй котельнăйсем тунă. Вĕсем вара садиксемпе, шкулсемпе, хуçалăхсен правленийĕсен çурчĕсемпе тата ытти объектсемпе çыхăннă. Газпа хутса ăшăтмалла тунă. Пĕчĕк шкулсене те, Якаткасси, Апчар, Шупуç шкулĕсем пеккисене те, газ кĕртмесĕр хăварман», – çапла аса илет шкулсене газ кĕртнĕ тапхăра Валерий Михайлович.

Пур шкула та, паллах, çак ырлăх пĕр вăхăтра çитмен – äçта маларах, äçта каярах. Сăмахран, Чуманкассинчи вăтам шкулта нумай çул хушши ĕçлекенсем хăйсен «иккĕмĕш килне» çут çанталăк çитнĕ куна манман-ха. И.А. Перлов, вăл вăхăтра шкул директорĕ пулнă май, 1991 çулта пăрăхсене çĕнĕрен улăштарнине те, 1995 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче кунта чăннипех те савăнăçлă ларутăру хуçаланнине те, вăл тапхăрта газ кĕртессипе темĕн тĕрлĕ чылай ĕç тунине те лайăх астăвать. Шăпах çав кун çулăм пек ялкăшса шкул тата район истории кĕрсе юлнă та.

Паян вара, хăй вăхăтĕнче район администрацийĕ, вĕрентӳ пайĕ тата шкул директорĕсем çанă тавăрса ĕçленипе, ку ыйту кун йĕркинче тăмасть те. Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ. Äна вăхăтра пурнăçласан каю та шăтмасть, ытти ĕçсене пурнăçлама та çул уçăлать.

Н. ДИМИТРИЕВА.

Спорт хыпарĕсем

Йĕлтĕр йĕрĕ старта чĕнет

Икĕ кун - февралĕн 14-15-мĕшĕсенче - Пĕтĕм Раççейре иртекен «Йĕлтĕр йĕрĕ – 2009» спорт мероприятине халалласа пирĕн районта та шкул ачисен тата ĕç çыннисен спартакиадисем иртеççĕ. Февралĕн 14-мĕшĕнче пурин те эстафета иртет. Вăтам шкулсен 12 участник тата пĕр представительпе пĕр судья, тĕп шкулсен 6 участник тата пĕр представительпе пĕр судья пулмалла. Эстафетăра 1991-92 çулсенче тата 1993-94 çулсенче çуралнă яшсен 3х3 км , хĕрсен 3х2 км чупмалла. Арçынсемпе хĕрăмсен эстафетисем те çак дистанцисемпех иртеççĕ. Февралĕн 15-мĕшĕнче вара йĕлтĕрпе чупса ăмăртассине палăртнă. 1991-92 çулсенче çуралнă яшсен, хĕрсен тата арçынсен 5-шер км, 1993-94 çулсенче çуралнă яшсен, хĕрсен тата хĕрăмсен – 3-шер км. Мала тухнă командăсене дипломсемпе парнесем парса хавхалантараççĕ. Пĕрремĕш вырăн çĕнсе илнĕ командăсем кубока тивĕçеççĕ. Уйрăммăн тупăшса призлă вырăнсене тухакансене те грамотăсемпе парнесем кĕтеççĕ. Ăмăртусем 10 сехетре пуçланаççĕ.

Февралĕн 15-мĕшĕнче районта «Йĕлтĕр йĕрĕ –2009» ăмăрту та иртĕ. Унта та пур вĕрентӳ учрежденийĕсен, ял тăрăхĕсен, ял хуçалăхĕсен, предприятисемпе организацисен командисем хутшăнмалла. Тĕп шкул командисем 10 çынран, вăтам шкул командисем – 20, ĕçлекенсен командисем – 10, район администрацийĕн пайĕсен командисем 5 çынран тăмалла. Арçынсен, 1991 çулта çуралнă тата кĕçĕнрех яшсен 3 км, хĕрарăмсен, 1991 çулта çуралнă тата кĕçĕнрех хĕрсен 2 км йĕлтĕрпе чупса тухмалла пулать. 1996 çулта çуралнисем тата кĕçĕнреххисем валли те 2 километрлă дистанци палăртнă. Ертӳçĕсен VIP-чупу пулать. Çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе парнесем кĕтеççĕ.

«Моргаушимежрайгаз» сообщает

Осторожность и строгое соблюдение правил пользования газом гарантируют вам безопасность

Уважаемые собственники и наниматели квартир, владельцы индивидуальных домов, использующие газ на бытовые нужды!

Для исключения случаев причинения ущерба и неприятностей себе и окружающим соблюдайте **Правила пользования газом в быту**.

Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» напоминает, что **во избежание несчастных случаев Вы обязаны:**

- проходить инструктажи по безопасному пользованию газом в быту в техническом кабинете филиала «Моргаушимежрайгаз» при первичном заселении или обмене квартиры, при первичном пуске газа, а также при проведении технического обслуживания внутридомового газового оборудования. Иметь инструкции по эксплуатации оборудования и соблюдать их;
- следить за нормальной работой газового оборудования, проверять тягу до включения и во время работы газовых приборов с отводом продуктов сгорания газа в дымоход;
- при неисправности газового оборудования, дымовых и вентиляционных каналов, при внезапном прекращении подачи газа закрыть немедленно все краны перед газовыми приборами и сообщить в аварийную службу филиала «Моргаушимежрайгаз» по телефону **04** или **60-2-24**. О неисправности дымовых и вентиляционных каналов многоквартирного дома сообщать также в эксплуатирующую жилищную организацию;
- при появлении запаха газа немедленно прекратить пользование им, перекрыть краны к приборам и на приборах, открыть окна или форточки для проветривания помещения, не включать и не выключать электроприборы, не зажигать огня, вызвать аварийную газовую службу по телефону **04** или **60-2-24** (из незагазованного помещения или от соседей);
- обеспечивать доступ работников филиала по предъявлении ими служебных удостоверений для осмотра, обслуживания и ремонта газового оборудования в период проведения указанных работ, а при аварийных ситуациях – в любое время суток;
- производить за свой счет покраску принадлежащих Вам участков внутреннего и наружного газопровода;
- нести затраты по ремонту опор и креплений, перекладке и капитальному ремонту (в необходимых случаях – замене пришедших в негодность) принадлежащих ему газопроводов и газового оборудования;
- экономно расходовать газ, своевременно оплачивать его стоимость и стоимость технического обслуживания газового оборудования;
- ставить в известность предприятие газового хозяйства при выезде из квартиры на срок более 1 мес.

Категорически запрещается:

- производить самовольное подключение, перестановку, изменение конструкции, замену и ремонт газовых приборов, баллонов и запорной арматуры, а также не осуществлять перепланировку помещения, где установлены газовые приборы, без согласования с филиалом «Моргаушимежрайгаз»;
- изменять устройство дымовых и вентиляционных систем, заклеивать вентиляционные каналы, замуровывать люки, предназначенные для чистки дымоходов;
- отключить автоматику безопасности и регулирования, пользоваться газом при неисправных газовых приборах, автоматике, арматуре и газовых баллонах, особенно при обнаружении утечки газа;
- пользоваться газовыми приборами при закрытых форточках, решетках вентиляционных каналов, отсутствии тяги в дымоходах и вентиляционных каналах, т.к. загрязнение помещения продуктами сгорания приводит к выделению угарного газа, при вдыхании которого через несколько минут наступает отравление;
- оставлять работающее газовое оборудование без присмотра (кроме приборов с автоматикой, рассчитанных на непрерывную работу);
- допускать к пользованию газовыми оборудованиями детей дошкольного возраста и лиц, не контролирующих свои действия и не знающих правил пользования этими приборами;
- использовать газ и газовые оборудования не по назначению;
- пользоваться помещениями, где установлены газовые приборы, для сна и отдыха;
- хранить в подвалах порожние и заполненные сжиженным газом баллоны.

Помните, что ответственность за безопасную эксплуатацию бытовых газовых приборов в домах и квартирах, за содержание их в исправном состоянии и в соответствии с требованиями «Правил пользования газом в быту» и паспортов на газовые приборы заводов-изготовителей несут владельцы и лица, пользующиеся газом.

Филиал «Моргаушимежрайгаз».

Килсе курăр

Концертран ан юлăр

Пирĕн районтан паллă çынсем сахал мар тухнă. Вăл шутран – Чăваш АССР тата РСФСР тава тивĕçлĕ искусство ĕçченĕ, Чăваш Республикинчи К.В. Иванов ячĕллĕ Патшалăх премийĕн лауреачĕ, паллă композитор Ф.С. Васильев. Вăл Тури Панклире çуралса ӳснĕ. Февралĕн 13-мĕшĕнче вара эсир унăн пултарулăхĕпе çывăхрах паллашма пултаратăр. Çак кун Чăваш филармонийĕнче Раççей Федерацийĕн халăх артисчĕ М.Н. Яклашкин профессор ертсе пыракан «Симфони капеллин» концерчĕ пулать. Концертăн пĕрремĕш уйрăмĕнче шăпах пирĕн ентешĕн Ф.С. Васильевăн произведенийĕсем янăрĕç.

Хамăр инф.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаю кирпичный дом в селе Моргауши.
Тел.: 8-927-865-98-94.

КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4.
Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 13-13.

ООО «Лотос» продает: мотоблоки, прицепы, банные печи (все это в кредит), керамзитобетонные блоки - 36 руб., пиломатериал, трубы б/у, цемент (мешок) - 195 руб.
Тел.: 8-927-848-84-30. 1-2.

Продается земельный участок под строительство (40 соток). Цена договорная.
Тел.: 8-927-996-12-37, 8-917-657-61-51.

Продается шифер а/ц плоский 120х150 - 50 шт., шифер а/ц восьмиволновый - 50 шт. Самовывоз. Цена договорная. Тел.: 8-927-991-66-30.

Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ çак шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Е.А. Ёрдукован юратнă амăшĕ

Антонина Васильевна
ФЕДОРОВА

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ ку шкулта нумай çул хушши учитель пулса ĕçленĕ

Ирина Евгеньевна
ПЕРКОВА

сарăмсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле хурланса пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 10.02.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3825.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.